25-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1942
МАРТ
13
ЭРНЕКУН
60 (6085) №

Чăваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ.

ХИСЕП ХĂМИ

Çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе пысăк тухăçлăхпа тата лайăх пахалăхпа ĕçленĕшĕн, ВКП(б) райкомĕсемпе ĕçсынни депутачĕсен районсенчи Совечĕсен исполкомĕсем тăратнă тăрăх, ялхуçалăхĕнче малта пыракансен республикăри Хисеп хăми çине çаксене кĕртнĕ:

14. **Вăрмар районĕнчи Кивĕ Мăрат ялсоветĕнчи Молотов ячĕпе тăракан колхоз** (колхоз председателĕ **Н. Андреев** юлташ). Колхоз çуртыри культурисен вăрлăхĕсене хăйне кирлĕ таран хатĕрлесе хунă. Вăрлăхсене сортланă, пур енчен те акма юрăхлă тунă. Ялхуçалăх машинисемпе инвентарĕсене, кÿлмелли, хатĕрсене юсанă. Колхоз вырăнти удобренисене пухса хатĕрлес ĕçе ăнăçлăн йĕркеленĕ.

Çуракине хатĕрленес ĕçĕпе уйрăмăнах **Алексеев** юлташ бригади лайăх ĕçленĕ.

15. **Чкаловски машинно-тракторнăй станци** (директорĕ **Р. А. Архипов**, политотдел начальникĕ **Х. Ш. Шакуров, старши механик В. Н. Северов**). МТС тракторсене юсамалли плана срокчен, февралĕн 1-мĕш тĕлнех, пурнăçланă. Тракторсене юсанă çĕрте шалти резервсемпе усă курнă. МТС мастерскойĕнчех кивĕ чаçсене юсаса çĕнетес, çĕнĕрен запаслă чаçсем туса хатĕрлес ĕçе ăнăçлăн йĕркеленĕ.

16. **Елена Ивановна Тестова**—Чкаловски МТС трактористки. Тестова юлташ тракторсене тата трактор çумне кăкарса ĕçлемелли машинăсене юсанă çĕрте производствăллă заданисене куллен ытлашшипех пурнăçласа пынă, хăй çумне çирĕплетнĕ трактора 1941 çулти декабрĕн 1-мĕш тĕлнех юсаса çитернĕ, кайран вара ытти тракторсене юсас ĕçе хутшăннă.

17. **Александра Андреевна Андреева**—Чкаловски МТС трактористки-комбайнерĕ. Андреева юлташ тракторсене юсанă çĕрте производствăллă заданисене куллен ытлашшипех пурнăçласа пынă, хăй çумне çирĕплетнĕ трактора 1941 çулти декабрĕн 1-мĕш тĕлнех юсаса çитернĕ, ун хыççăн комбайна юсама тытăннă, халĕ радиатор вăрринe юсаса çĕнетес тĕлĕшпе ĕçлет.

18. **Александр Никифорович Северов**—Чкаловски МТС-ри тракторсен 6-мĕш №-лĕ бригадин бригадирĕ. Северов юлташ хăй бригадинчи тракторсене тата трактор çумне кăкарса ĕçлемелли машинăсене пурне те кăçал январĕн 1-мĕшĕ тĕлнех юсаттарса çитернĕ.

19. **Иван Александрович Ситов**—Чкаловски МТС-ри тракторсен 5-мĕш №-лĕ бригадин бригадирĕ. Ситов юлташ хăй бригадинчи тракторсене срокченех, 1942 çулти январĕн 1-мĕш тĕлнех, юсаттарса çитернĕ.

20. **Егор Дмитриевич Краснов**—Чкаловски МТС-ри тракторсен 4-мĕш №-лĕ бригадин бригадирĕ. Краснов юлташ хăй бригадинчи тракторсене 1942 çулти февралĕн 1-мĕш тĕлне тата лайăх пахалăхпа юсаттарнă, трактор çумне кăкарса ĕçлемелли ялхуçалăх машинисене 1942 çулти февралĕн 28-мĕш тĕлне юсаттарса çитернĕ.

21. **Алексей Ильич Кузнецов**—Чкаловски МТС-ри токарь. Кузнецов юлташ запаслă çĕнĕ чаçсем туса хатĕрлеме, кивĕ чаçсене юсаса çĕнетме панă заказсене куллен ăнăçлăн ĕлкĕртсе пырса, тракторсене юсас ĕçĕн планне срокченех пурнăçлама май панă.

Çĕмĕрле районĕ çуракине начар хатĕрленет

ÇĔМĔРЛЕ. (Телефонпа). Мартăн 10-мĕшĕнче ялхуçалăхĕнче малта пыракансен канашлăвĕ пулса иртрĕ. Канашлура 200 çын ытла пулчĕ. Вĕсенчен çурри ытла хĕрарăмсем.

Иртнĕ çулхи ялхуçалăх ĕçĕсемпе кăçалхи çуракине хатĕрленесси çинчен райçĕрĕç пайĕн заведующийĕ Чумейкин юлташ доклад туса пачĕ. Докладчик та, канашлура тухса калаçакансем те Çĕмĕрле районĕнчи колхозсем кăçалхи çуракине çителĕксĕр хатĕрленнине палăртрĕç. Чăнах та, хăшпĕр колхозсем çуракине хăрсех хатĕрленеççĕ. Тĕслĕхрен, «Лесной огонек» колхозах илме пулать. Ку колхоз иртнĕ çулсенче начар ĕçлесе пынă колхозсен шутĕнче тăнă. Кăçалхи çул çак колхоз çуракине хаяргаллăн хатĕрленет. Колхоз председателĕ Короткова канашлура хĕрарăмсем епле тăрăшса ĕçлени çинчен каласа пачĕ, хăй çине вăл çуракине çак кунсенче пур енчен те хатĕрлесе çитме тахăклă обязательствăсем илчĕ.

Анчах районри нумай колхозсем çуракине пачах çителĕксĕр хатĕрленеççĕ. Нумай колхозсенче ялхуçалăх машинисене юсама тытăнман. Магарин ялсоветне кĕрекен колхозсенче вăрлăхсем те çитмеççĕ. Уйрăмах районра удобренисем хатĕрлес тата кадрсем вĕрентсе хатĕрлес ĕç питех те начар. Колхозсем кăçал 35 тонна торф уя кăлармалла пулсан, паянхи куна çитсе ним чухлĕ те кăларман. Кĕл пухас, тĕрлĕ минераллă удобренисем кÿрсе килес тата уя тислĕк кăларас ĕçсем те пачах çителĕксĕр пулса пыраççĕ, колхозсене кирлĕ кадрсене вĕрентсе хатĕрлеме те тытăнман. Колхозсенче ут таврашĕсем çитмеççĕ, урапасем юсавлă мар, чылай колхозсенче лашасене начар пăхаççĕ.

Канашлура тухса калаçакансем пурте çуракине хатĕрленес ĕçе вăйлатма, ăмăртса ĕçлеме пулчĕç.

Канашлу çитес çуракинче ăмăртса ĕçлеме Хĕрлĕ Чутай районне ăмăртăва чĕнчĕ.

Х. ЛИСИН.

Пĕр-пĕрин ĕçне тĕрĕслетпĕр

Кÿлхĕрри ялсоветне пĕр колхоз кĕрет. Колхоз пĕчĕккех мар — пурĕ 6 бригада. Колхозниксен пĕрлешÿллĕ пухăвĕнче тата бригадăсенче кашнинчех çуракине хатĕрленес ыйтусене тĕплĕн сÿтсе-явнă. Сÿтсе-явнă çеç мар, кашни бригадăна, кашни уйрăм колхознике заданисем панă.

Колхозниксен юлашки пухăвĕ февралĕн 19-мĕшĕнче пулчĕ. Çак пухучченех эпир бригадăсем, уйрăм колхозниксем хăйсене хушнă ĕçсене мĕнле туса пынине тĕрĕслесе тухрăмăр.

Çуракине пирĕн «Трактор» колхоз, пĕтĕмĕшпе илсен, хатĕрленсе çитмен. Ялхуçалăх машинисене, плугсене пурне те юсаса, çу сĕрсе лартнă. Вăрлăхсем пур культурăсем енĕпе те çителĕклĕ хатĕрленĕ, халь вĕсене сортласа пĕтереççĕ. Нумай пулмасть вĕсем мĕнле шăтнине тĕрĕслесе килтĕмĕр. Начар е пачах шăтман вăрлăхсем çук, вăрлăхсем пурте таса. Кунта пирĕн пĕр пысăк çитменлĕх пулчĕ. Хамăр асăрхаман пирки эпир 100 центнера яхăн çĕрулмине кăшт шăнтса ятăмăр. Çавăнпа пирĕн халь çĕрулми вăрлăхĕ çитмест. Çак çитмен вăрлăха эпир çĕрулми тăрринсене касса хатĕрлесшĕн. Ку ĕçе колхозра тума тытăннă, анчах бригадăсем çак ĕçе пуçармарĕç-ха. План тăрăх, кашни бригадăн 10 центнер çĕрулми вăрлăхĕсене халех касса хатĕрлемелле. Çакна тума уйрăм колхозниксене хушнă.

Эпир çуракине хатĕрленес ĕçри ваккĕвексене тĕрĕслесе тухрăмăр, туса çитермен ĕçсем пирĕн чылай палăрчĕç. Сăмахран, сÿресемпе урапасене çуракине халь тесен халь тухса каймалла хатĕрлесе çитермен-ха. Вĕсен пайĕсем тата лаша кÿлмелли хатĕрсем çитмеççĕ-ха. Ку тĕлĕшпе уйрăмах 6-мĕш бригадăн бригадирĕ А. Кириллов тата 3-мĕш бригадăн бригадирĕ Н. Филиппов юлташсем начартарах ĕçлеççĕ. Вĕсем те халь çуракине ăнăçлă иртттерме кирлĕ вак-тĕвек ĕçсене çак çитес кунсенче туса иртттерме сăмах пачĕç, хĕрÿллĕн ĕçлеме тытăнчĕç. Колхозниксем те хăйсене хушнă ĕçсене тăрăшса тăваççĕ. Т. Илларионов—ватă колхозник. Эпир ăна тĕрлĕ пăлавсем, чĕлпĕрсем, вĕренсем явса хатĕрлеме хушрăмăр.

Колхозăн кÿлмелли лашасем пурĕ 60 пуç шутланать. Çуракине ăнăçлăн иртттерме çак лашасем сахалтарах. Çавăнпа та эпир халь тихасене ĕçе вĕрентетпĕр. Васильева конюх ку вăхăта çитсе 3 тихана ĕçе вĕрентсе çитерчĕ ĕнтĕ. Тихасемсĕр пуçне тата эпир çитес çуракинче вăкăрсемпе, хĕсĕр ĕнесемпе усă курма палăртнă. Вăкăрсемпе хĕсĕр ĕнесене вĕрентме эпир М. Югина хушрăмăр. Çапла вара, çак кунсенче вăкăрсемпе те эпир ĕçлеме тытăнатпăр.

Колхозăн хăйне кирлĕ кадрсем пур. Çитменнисене вĕрентсе хатĕрлетпĕр. Трактористсен курсĕнче пирĕн 2 çын, шофер пулма 2 çын вĕренеççĕ, Алексеевăна ветеринар пулма вĕренме ятăмăр.

Пирĕн колхозран отечественнăй вăрçа чылай юлташсем кайрĕç, унта эпир колхозăн чи лайăх çыннисене ăсатрăмăр. Çапла пулин те, эпир, колхоза юлнисем, хамăр умра тăракан задачăсене пурнăçлатпăрах, кăçалхи çуракине ăнăçлăн иртттерессе шанатпăр. **Г. ЮГИН.**

Калинински районри Кÿлхĕрри ялсовечĕн председателĕ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Мартăн 10-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерÿ

Мартăн 10-мĕшĕнче пирĕн войскăсем, нимĕçсен фашистла войскисене хирĕç çапăçса, малалла наступлени туса пынă. Пирĕн чаçсем пыра-пыра çапса противника халăх пурăнакан темиçе пунктран хăваласа кăларнă, противник техникăпа чĕрĕ вăй тĕлĕшĕнчен пысăк сухатусем тÿснĕ.

Мартăн 9-мĕшĕнче нимĕçсенне 30 самолет пĕтерсе тăкнă. Пирĕн 11 самолет пĕтнĕ.

* * *

Мартăн 9-мĕшĕнче пирĕн авиацин чаçĕсем противникăн войскăсемпе грузсем турттарса пыракан 180 автомашинине, боеприпассем тиенĕ 130 лавне, бензин тултарнă 3 автоцистернине, 40 орудине, зенитнăй пулеметсен 10 точкине, 40 минометне пĕтерсе тăкнă тата сиенленĕ, чылай вырăнсенче чугунçул линине пăснă, противник юланутçисен эскадронне тата пехотăн 6 ротине сапаласа янă, вĕсенчен пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Çурçĕр-Хĕвеланăç фрончĕн участокĕсенчен пĕринче кĕрешекен пирĕн чаçсем мартăн 8-мĕшĕнче, тăшман вăйлăн хирĕç тăнине сирсе пăрахса, унăн оборонин линине çĕмĕрсе кĕнĕ. Пĕр кун хушшинче пирĕн боецсем çав участокра халăх пурăнакан 9 пункта йышăнса илнĕ, тăшмана техникăпа чĕрĕ вăй тĕлĕшĕнчен пысăк сиен кÿнĕ. Малалла наступлени туса пырса, пирĕн чаçсем мартăн 9-мĕшĕнче, противника хирĕç çапăçса, халăх пурăнакан татах 8 пункта йышăнса илнĕ. Мартăн 9-мĕшĕнче, пĕр кун хушшинче кăна, тулли мар даннăйсем тăрăх, пирĕннисем çакнашкал трофейăсем тытса илнĕ: 84 оруди, самолет, 65 автомашина, штабăн 4 автобусĕ, 21 мотоцикл, 4 трактор, бронемашина, 10 километр тăршшĕ кабель тата ытти тĕрлĕ çар пурлăхĕсем. Çапăçу хирĕнче тăшманăн салтакĕсемпе офицерĕсем питех те нумай вилсе юлнă. Тыткăна илнисем нумай.

* * *

Хĕвеланăç фрончĕн участокĕсенчен пĕринче пирĕн боецсем Л. ялĕнче çирĕпленсе ларнă противника çапăрса илнĕ. Нимĕçсем хирĕç тăнине çĕнтерсе, пирĕн боецсем яла çĕмĕрсе кĕнĕ те ăна йышăнса илнĕ. Çав çапăçура нимĕçсен фашистла оккупанчĕсене 200 çынна ытла пĕтерсе тăкнă. Тепĕр участокра совет артиллеристĕсем, противника хирĕç вăйлăн персе тăрса, пĕр кун хушшинче тăшманăн 6 блиндажне тата 3 ДЗОТ-не çĕмĕрнĕ, тăшманăн 2 огневой точкине тата нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсене 150 çынна çити пĕтерсе тăкнă.

* * *

Кăнтăр-Хĕвеланăç фрончĕн участокĕсенчен пĕринче кĕрешекен пирĕн боецсем пĕр кун хушшинче халăх пурăнакан 4 пункта нимĕçсенчен ирĕке кăларнă тата нимĕçсенне 5 оруди, 21 пулемет, 14 автомат, 3 миномет, 200 винтовка, 60.000 ытла патрон тытса илнĕ. Противникăн салтакĕсемпе офицерĕсем 600 çын ытла вилсе пĕтнĕ. Поляков юлташ командир пулса ертсе пыракан чаçри танкистсем противника хирĕç ăнăçлăн кĕрешнĕ. Вĕсем тăшманăнне 6 оруди, 8 миномет, 12 пулемет, 1 танк тата противникăн нумай салтакĕсене пĕтерсе тăкнă.

* * *

У. пункт çине наступлени туса пыракан пирĕн пехотăна хирĕç блиндажран нимĕçсен икĕ офицерĕ пулеметсенчен вăйлăн персе тăнă. Красноармеец Никита Иванович Тумаков, тăшманăн огневой точки палне систермесĕр шăвăнса пынă та блиндажа çĕмĕрсе кĕрсе, нимĕç офицерĕсене хирĕç штык вĕççĕн çапăçма тытăннă. Офицерсенчен пĕри пирĕн боеца мăйĕнчен ярса тытса пăвма тытăннă. Тумаков, хăвăртăн çавăрăнкаласа, тăшманăн пиçиххийĕ çинче çакăнса тăракан кинжалне туртса кăларнă та гитлеровеца чиксе пăрахнă. Тепĕр офицерĕ тарма хăтланнă, анчах ăна хăюллă боец хăваласа çитнĕ те вĕлернĕ. Çапла тăшманăн огневой точкине пусарса лартнă. Пирĕн пехота, атака туса, халăх пурăнакан пункта йышăнса илнĕ.

* * *

Нимĕçсен 100-мĕш дивизийĕнчи хорватсен 369-мĕш полкĕнчен тыткăна парăннă салтак Николи Янжек çапла каласа панă: «Гитлерăн приказĕ тăрăх, Павелич июль уйăхĕнче Германи командованийĕн распоряженине хорватсен 6.000 салтакне панă. Вĕсенчен пĕр пин салтакне часах Германие таварнă, унта вĕсене тепĕр хут тĕплĕн суйланă. Вĕсене политика тĕлĕшĕнчен шанчăксăр тесе шутланă. Совет Союзĕпе Германи хушшинчи вăрçă фронтне 5 пин салтакпа офицер тухса кайнă, анчах вырăна 4 пин çын çеç çитнĕ. 800 салтак килнĕ чухне çул çинче тарнă, 200 çынна военно-полевой суд каторгăна ĕçлемелле туса Германие ăсатнă. Малтанхи çапăçусенчех вырăссен кавалерийĕ хорватсен полкĕн 1-мĕш батальонне пĕтĕмĕшпех пĕтерсе тăкнă. Пĕр пин салтакпа офицертан нумайăшĕ пĕтнĕ, виçĕ пайĕ кăна тăрса юлнă. Полякран çав вăхăт хушшинче татах 500 çын тарнă. Салтаксенчен нумайĕшĕсем Гитлера кураймаççĕ тата фашистла Германи поражени тÿсессине кĕтеççĕ».

* * *

Гитлерла мерзавецсем тыткăна лекнĕ красноармеецсене çавтери тискеррĕн мăшкăлласа асаплантараççĕ. Ленинград облаçĕнчи Отвидино ялне нимĕç захватчикĕсенчен ирĕке кăларнă хыççăн пирĕн боецсем пĕр лупас айĕнче тата икĕ мунчара 23 красноармеецăн, гитлеровецсем асаплантарса вĕлернĕскерсен, виллисене тупнă. Пĕр красноармееца çатта-çарамас хăварса лупас айне çакнă. Унăн пĕтĕм ÿтне çĕçĕпе каскаласа пĕтернĕ. Икĕ красноармееца гитлеровецсем хĕртнĕ хулăсемпе асаплантарнă. Вĕсен ÿчĕсене пур çĕртен те пĕçертсе, çунтарса пĕтернĕ. Ытти красноармеецсене çунакан шĕвек сапса çунтарнă, вĕсен ÿчĕсем çурма-çунăк пулса юлнă.

* * *

Салангген сывăхĕнче (Норвеги) нимĕçсен оборона линине тунă çĕрте норвежец-строительсен пысăк группи нимĕçсен хуралне вĕлерсе пĕтернĕ те строительство материалĕсен темиçе складне вут тивертнĕ. Нимĕçсен вилнĕ салтакĕсемпе офицерĕсен хĕçпăшалĕсене хăйсемпе пĕрле илсе, Норвеги патриочĕсем тусем хушшине кайса çухалнă.

* * *

Сталин юлташ Хĕрлĕ Çар 24 çул тултарнă тĕле панă приказ çине Бакури нефтяниксем производствăри çĕнĕ çĕкленÿпе ответленĕ. Лениннефть трестăн 6-мĕш промыслин коллективĕ планран иртттерсе 900 тонна нефть кăларнĕ. Сталин ячĕпе тăракан нефтеперегоннăй заводăн коллективĕ çак кунсенче планран иртттерсе туса кăларнă авиаци бензинне 2 эшелонпа действующи çара ăсатнă.

Мартăн 11-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерÿ

Мартăн 11-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле фронтăн чылай участокĕсенче совет войскисем, нимĕçсен фашистла войскисене хирĕç çапăçса, наступлени туса пынă.

* * *

Миронов юлташ командир пулса ертсе пыракан гвардейски чаçри боецсем, пĕр кун хушши çапăçса, халăх пурăнакан пĕр пункта йышăннă тата тăшманăнне пĕр танк, 4 пулемет, 3 оруди тытса илнĕ. Гитлеровецсем пысăк çухатусем тÿснĕ. Тыткăна илнисем пур.

* * *

Ленинград фрончĕн уйрăм участокĕсенче кĕрешекен пирĕн чаçсем, противника хирĕç икĕ кун хушши çапăçса, çĕрпе йышăнран купаласа тунă 12 огневой точкăна, 27 блиндажпа землянкăна пĕтерсе тăкнă тата боеприпассем хунă пысăк склада сирпĕнтерсе янă. Противникăн çав вăхăт хушшинче 1.500 салтакĕпе офицерĕ вилсе пĕтнĕ.

* * *

Санитар Горячев тăшман персе тăнă вăхăтрах çапăçу хирĕнчен аманна 14 боеца вĕсен хĕçпăшалĕсемпе пĕрле йăтса тухнă тата вĕсене медицина тĕлĕшпе малтанхи пулăшу панă.

* * *

Халăх пурăнакан С. пунктшăн пынă çапăçура минометнăй ротăри боецсем ăнăçлăн кĕрешнĕ. Çав çапăçура противник темиçе хутчен контратака тума хăтланнă, анчах кашнинчех ăна минометсенчен вăйлăн персе тăрса, сирпе-сирпе пăрахнă. Çапăçу хирĕнче нимĕçсем 75 виле пăрахса хăварнă. Çапăçура кĕçĕн сержант Кассаринăн расчечĕпе Крутихин наводчик уйрăмах палăрнă.

* * *

Нимĕçсен 260-мĕш пехотнăй дивизийĕн 460-мĕш полкĕнчен тыткăна лекнĕ ефрейтор Вильгельм Денгер çапла каласа панă: «Пирĕн рота питех те йывăр çухатусем тÿсрĕ. Ăна темиçе хутчен вăй хушса панă пулин те, унăн йышĕнчен пĕтĕмпе те 60 çын кăна тăрса юлчĕ. Пирĕн чаçа килекен резервистсем пурте пекех 35 çултан пуçласа 45 çула çитнисем. Вĕсем çар ĕçне сахал вĕреннĕ, çапăçма пултараймаççĕ. Командирсем тĕлĕшпе те пирĕн рота пысăк çухатусем тÿсрĕ. Ротăн икĕ командирĕ стройран тухрĕ. Халĕ ĕнтĕ ротăра фельдфебель командир пулса тăрать. Пирĕн салтаксем пурăнакан условисем тÿсме çук йывăр. Эпир пурте пыйтланса кайрăмăр. Кашни кун хам та пулин леш тĕнчене ăсанать. Халĕ ĕнтĕ Германи çĕнтерессине никам та тенĕ пекех ĕненмест. Салтаксем хушшинче пурте хăçан киле таврăнасси çинчен кăна калаçаççĕ».

* * *

Нимĕçсен 213-мĕш пехотнăй дивизийĕн 375-мĕш полкĕнчи 11-мĕш ротăран тыткăна лекнĕ салтак Адольф Бойм çапла каласа панă: «Пирĕн полкăн подразделенийĕсем тăракан яла вырăссем февралĕн 23-мĕшĕнче вăйлăн атакăларĕç. Вырăссен танкĕсем пирĕн салтаксене пулеметсенчен персе çулса пычĕç тата танксен гусеницисемпе таптаса пычĕç. Çавтери вăйлă танкка пуçланчĕ. Хĕçпăшалĕсене пăрахса, салтаксемпе офицерсем тарса пытанма хăтланчĕç, анчах та тарма никçта та май пулмарĕ. Салтаксен пысăк пайĕ ушкăнĕ кăна чĕрĕ тăрса юлчĕ. Вĕсем аллисене çĕклерĕç те тыткăна парăнчĕç».

* * *

Нимĕçсен вилнĕ унтер-офицерĕ Вильгельм Ор çумĕнче вăл Берлина хăйĕн арăмĕ патне ăсатма ĕлкĕреймен çыру тупнă. Унта çапла каланă: «Вырăссем пире атакăлаççĕ, пирĕн чакма лекет. Мĕн пулĕ-ши ĕнтĕ çуркуннe? Çакăн çинчен шухăшлама та хăрушă. Паян эпĕ хам та хам мар; манпа мĕн пулса иртнине эпĕ ăнланмастăп».

* * *

Каспи тинĕсĕ çинчи Носков юлташ капитан пулса тăракан танкер кашни рейсра нормăран иртттерсе 700-шер тонна нефтепродуктсем турттарать.

Мартăн 11-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерÿ

Мартăн 11-мĕшĕнче пирĕн войскăсем, фронтăн чылай участокĕсенче вăйлăн çапăçса, наступлени туса пынă. Тăшманăн войскисем çынсемпе техника тĕлĕшĕнчен пысăк çухатусем тÿсеççĕ.

Тĕрĕслесе палăртнă тăрăх, мартăн 8-мĕшĕнче совет авиацийĕ нимĕçсенне малтан пĕлтернĕ пек 39 самолет мар, 83 самолет пĕтерсе тăкнă, вăл шутран 39-шĕ «Ю-52» йышши виçĕ моторлă транспортнăй самолетсем.

Мартăн 10-мĕшĕнче нимĕçсен 19 самолетне пĕтерсе тăкнă. Пирĕн 5 самолет пĕтнĕ.

* * *

Мартăн 10-мĕшĕнче пирĕн авиацин чаçĕсем нимĕçсен войскăсемпе грузсем турттарса пыракан 180 автомашинине яхăн, боеприпассем тиенĕ 45 лавне, 5 орудине, зенитнăй пулеметсен 2 точкине пĕтерсе тăкнă тата сиенленĕ, боеприпассен 2 складне тата горючисен пĕр складне сирпĕнтерсе янă, чугунçул çинчи эшелона çĕмĕрнĕ, противникăн пехотине пĕр батальона çити сапаласа янă, вĕсенчен пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Пирĕн пĕр часть (Кăнтăр-Хĕвеланăç фрончĕ) халăх пурăнакан темиçе пункта йышăнса илнĕ. Çапăçу хирĕнче тăшманăн 650 вилли выртса юлнă. Тытса илнĕ трофейăсем хушшинче: 11 оруди, 55 пулемет, 32 автомат, 400 винтовка, 25 миномет, танксене хирĕç пемелли 4 пăшал, 60.000 патрон, 6.800 мина, 1.800 граната, 100 лаша, пĕр танк, 5 радиостанци тата ытти çар пурлăхĕ пур.

* * *

Калинин фронтĕнче кĕрешекен пирĕн пĕр гвардейски часть, икĕ кун хушшинче нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсене 450 çынна пĕтерсе тăкнă. Çав чаçри артиллеристсем тÿрĕ тĕллесе персе тăшманăн 4 танкне çĕмĕрнĕ. Тепĕр участокра пирĕн боецсем, противникăн çирĕплетчĕ вырăнне татса кĕрсе, 21 пулемет, 4 оруди, 100 винтовка, нумай боеприпассем тытса илнĕ. Çапăçу хирне нимĕç войскисем çĕршер виле пăрахса хăварнă.

* * *

Немцевич юлташ командир пулса ертсе пыракан авиаци чаçĕнчи летчиксем мартăн 9-мĕшĕнче нимĕçсенне 5 полевой оруди, 8 миномет, 26 автомашина, 6 пулемет, 8 лав пĕтерсе тăкнă, противникăн çирĕплетнĕ 37 пунктне аркатса пăрахнă, нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсене 350 çынна çити сапаласа янă, вĕсенчен пĕр пайне пĕтерсе тăкнă. Çав кун Шалаев тата Корчагин лейтенантсен экипажĕсем противникăн войскисем çине бомбăсем пăрахма пилĕкшер хут вĕçсе тухнă. Харитонов, Памфилов тата Кореев лейтенантсем 4—5 боевой вĕçевсем тунă.

* * *

Противник çирĕплетнĕ халăх пурăнакан В. пункта атакăланă вăхăтра пирĕн танксенчен пĕрине çĕмĕрнĕ пулнă, танк тăшман тăнă вырăнта чарăнса ларнă. Танк ăшĕнче механик-водитель Коваленок юлнă. Коваленок юлташ, тăшмана хирĕç персе тăрса, машина ăшĕнче икĕ сехет хушши ларнă. Халăх пурăнакан пунктран нимĕçсене хĕссе кăларсан, пирĕн боецсем хăюллă танкиста çăлса хăварнă.

* * *

Харьков облаçĕн нимĕçсем оккупациленĕ районсенчен пĕринче кĕрешекен К. юлташăн партизанла отрячĕ пĕр уйăх çурă хушшинче нимĕçсен 24 автомашинине, боеприпассемпе снаряжени тата продовольстви тиенĕ 7 лавне пĕтерсе тăкнă, телеграф линине темиçе тĕлте татнă тата хирти телефон кабельне 10 километр тăршшĕ касса илнĕ. Çав вăхăт хушшинчех партизансем нимĕçсен фашистла оккупанчĕсене 150 çынна ытла пĕтерсе тăкнă.

* * *

Нимĕçсен 17-мĕш пехотнăй дивизийĕн 21-мĕш пехотнăй полкĕнчи батальон командирĕ обер-лейтенант Фрусайт «Подразделенири ĕçсем 1942 çулти февралĕн 20-мĕш тĕлне мĕнле тăни çинчен» çырнă донесенире çапла каланă: «Юлашки донесение тăратнăранпа пулса иртнĕ хаяр çапăçусенче 1942 çулти январĕн 3-мĕшĕнче артиллеристсен шутĕнчен хушса панă çынсем пĕтĕмĕшпех стройран тухрĕç, кăçалхи февралĕн 12-мĕшĕнче Германирен килнĕ çĕнĕ вăйсем, пирĕн подразделение хушса панăскерсем, пысăк çухатусем тÿсрĕç. Батальонри çынсен 4 пайĕнчен виçĕ пайне нумай вăхăт хушши лазаретсенче усрамалла, анчах та личнăй состав питех те çителĕксĕр пулнă пирки вĕсене йывăр службăран хăтарма май çук. Салтаксен шухăш-кăмăлĕ питĕ хавшаса çитнĕ. Февралĕн 12-мĕшĕнче хушса панă çынсем нумайĕшĕсем ватă енне сулăннăскерсем пулса тăраççĕ, вĕсем çар тĕлĕшпе сахал хатĕрленнĕ тата вĕсенчен уйрăм çынсем кăна пулемета тыткалама пултараççĕ. Çав çынсем наступлени тума юрăхсăр, оборонăра вара вĕсемпе начальниксем енчен çирĕппĕн пăхса тăрсан кăна усă курма лекет. Çав çынсенчен пĕр пайĕ фронта тăм илсе ярисем тата чирлисем килеççĕ».

* * *

Финсен «Пярми» ятлă уйрăм батальонĕнчен пирĕн енне каçнă финн салтакĕ Вяйне Неваранта çапла каласа панă: «Влаçа тытса тăракан Маннергейм — Рюти ушкăнне, Гитлера сутăннăскерсене, хирĕç çĕкленнĕ тарăху çĕршывра та, çарта та ÿссех пырать. Финсен хăшпĕр чаçĕсенче вăрçа хирĕç стихийăллă уйрăм выступленисем те пулнă. 26-мĕш пехотнăй дивизин «С» полкĕнчи салтаксем çапăçăва кĕрессинчен пăрăннă. Çарăн командованийĕ салтаксене нумайĕшĕсене суда панă, полка вара салатса янă. Çартан салтаксем тарасси ытларах та ытларах ÿссе пырать. Тĕрмесемпе лагерьсем арестленисемпе тулса ларнă. Сăмахран, Сукева тĕрминче 700 ытла дезертир ларать. Хăйсен хĕçпăшалĕсемпех тарса каякан дезертирсем нумайĕшĕсем землянкăсенче, вăрмантри пÿртсенче пытанса пурăнаççĕ. Вĕсем шуцкоровецсемпе полицие хирĕç партизанла кĕрешеççĕ, диверсиллĕ актсем тăваççĕ. Карккила ялĕ çывăхĕнче дезертирсен çĕр çынран тăракан отрячĕ кĕрешет. Çав отряд Карккила патĕнчи чугунçул кĕперне взрыв туса сирпĕнтернĕ».

* * *

Нимĕçсен обер-ефрейторĕ К. Вермер Берлина Георг Кунц патне çапла çырнă: «Çуркунне тĕлне пире тыла илсе тухаççĕ пулĕ тесе шанатпăр. Халĕ эпир темĕнле сапаланса кайнă кĕтÿ пулса тăратпăр».

Вĕçĕ 2-мĕш страницăра

ЮЛАШКИ СЕХЕТРЕ

Калинин фронтĕнчи войскăсем 1942 çулти февралĕн 5-мĕшĕпе мартăн 8-мĕш хушшинче тытса илнĕ трофейăсем

Калинин фронтĕнчи войскăсем февралĕн 5-мĕшĕнчен пуçласа мартăн 8-мĕшне çитиччен противникран çакăн пек трофейăсем ТЫТСА ИЛНĔ:

Танксем—78, тĕрлĕрен калибрлă орудисем—172, минометсем—209, станковăй тата ручной пулеметсем—824, танксене хирĕç пемелли пăшалсем—181, автоматсем—568, винтовкăсем—3.432, автомашинăсем—1.177, лавсем—300, кухньăсем—8, радиостанцисем—30, паровозсем—2, гранатăсем—9.000, минăсем—10.500, снарядсем—7.000, винтовка патронĕсем—2 миллион, боеприпассем тиенĕ икĕ эшелон тата боеприпассен икĕ склачĕ, япаласен икĕ склачĕ.

Çав вăхăт хушшинчех сывлăшри çапăçусенче, зенитнăй артиллерирен персе тата аэродромсем çинче нимĕçсен 277 самолетне пĕтерсе тăкнă, автоматчиксен десантне турттарса пыракан бронепоезда çĕмĕрнĕ, 39 танк, 142 оруди, 70 пулемет, 2629 автомашина, 27 мотоцикл, 1374 лав; 2 паровоз; чугунçул çинчи 104 вагона, 17 цистернăна, горючисен складне, снарядсен 7 складне пĕтерсе тăкнă.

Февралĕн 5-мĕшĕнчен пуçласа мартăн 8-мĕшне çитиччен Калинин фрончĕн районĕнче нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсем 49.700 çын вилсе пĕтнĕ. Халăх пурăнакан 161 пункта нимĕç оккупанчĕсенчен ирĕке кăларнă.

СОВИНФОРМБЮРО.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Мартăн 11-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерĕвĕн вĕçĕ

* * *

Германи командованийĕ хушнипе Гитлерăн Венгрири лакейĕсем Совет Союзĕпе Германи хушшинчи вăрçă фронтне ăсатма ганвецки полкăн маршевăй ротине пухса хатĕрленĕ. Çакăн çинчен пĕлсен, салтаксем фронта каяссинчен пăрăннă. Командовани хăратнине пăхмасăрах, вĕсем—Совет çарне хирĕç çапăçмастпăр — тесе татăклăн пĕлтернĕ. Пăхăнма килĕшмен салтаксене Венгри влаçĕсем хаяррăн айăпласа наказани панă. Унтер-офицерсене арестленĕ те тĕрмене хупнă. Салтаксене питĕ вăйлă хуралпа сыхласа пырса, Будапешт хулинчен Сегец хулине ăсатнă.

* * *

Узбекистан ĕçсыннийĕсем вăрçă пуçланнăранпа СССР оборонин фондне 57.492.000 тенкĕ укçан, 56.327.000 тенкĕлĕх государство заемĕсен облигацийĕсем, ылттăн, кĕмĕл япаласем нумай хывнă. Оборона фондне çавăн пекех тата 2.777.518 килограмм чĕрĕ çĕрмамăкĕ, 17.962 килограмм пурçăн кокони, тирсăран, тĕштырă тата ытти ялхуçалăх продукчĕсем илтех те нумай панă.

Мартăн 12-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерÿ

Мартăн 12-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле фронтăн уйрăм участокĕсенче совет войскисем, нимĕçсен фашистла войскисене хирĕç çапăçса, наступлени туса пынă.

* * *

Хĕвеланăç фрончĕн участокĕсенчен пĕринче кĕрешекен пирĕн стрелковăй часть, противника хирĕç пĕр кун хушши вăйлăн çапăçса, нимĕçсенне 4 оруди, 5 пулемет, 5 миномет, çар грузĕсем тиенĕ 12 лав пĕтерсе тăкнă, 3 оруди, 7 миномет, 8 пулемет, 25 автомат тата боеприпассем нумай тытса илнĕ. Противникăн салтакĕсемпе офицерĕсем 450 çын вилсе пĕтнĕ.

* * *

Кăнтăр фрончĕн участокĕсенчен пĕринче пирĕн чаçсем, тăшмана хирĕç çапăçса, малалла куçаççĕ тата икĕ кун хушшинче халăх пурăнакан 5 пункта йышăнса илнĕ. Çапăçу хирĕнче тăшманăн салтакĕсемпе офицерĕсем 400 çынран кая мар вилсе выртса юлнă. Çакăн пек трофейăсем тытса илнĕ: 11 оруди, икĕ миномет, пулеметсем, автоматсемпе винтовкăсем. Тепĕр участокра пирĕн боецсем нимĕçсен 257-мĕш пехотнăй дивизийĕн 457-мĕш полкне çапса аркатнă, нимĕçсене тыткăна илнĕ тата трофейăсем нумай тытса илнĕ.

* * *

Кăнтăр-Хĕвеланăç фрончĕн участокĕсенчен пĕринче кĕрешекен пирĕн часть, пĕр кун хушши çапăçса, халăх пурăнакан 4 пункта йышăнса илнĕ, противника чĕрĕ вăйпа техника тĕлĕшĕнчен пысăк çухатусем кÿнĕ. Çапăçура Болинов лейтенантăн подразделенийĕ хăюлăхпа паттăрлăх кăтартнă. Вăл тăшманăн темиçе хаяр контратакине сирсе пăрахнă та, противник вăйлăн çирĕплетнĕ пункта чи малтан çĕмĕрсе кĕрсе, урамри тытăçура 50 нимĕçе ытла вĕлернĕ.

* * *

Хура тинĕс флотĕнчи летчиксем юлашки кунсенче тăшманăн аэродромĕсем çине темиçе хут та вĕçсе кайса тапăннă. Бомбăсем тĕл пăрахса, нимĕçсен 18 самолетне пĕтерсе тăкнă, унсăр пуçне противникăн 10 самолетне пысăк сиен кÿнĕ.

Кăнтăр фрончĕн участокĕсенчен пĕринче пулса иртнĕ çапăçу вăхăтĕнче взвод командирĕ аманнă пулнă. Красноармеец Бузаев взвода ертсе пырассине хăйĕн çине илнĕ те, взвод пуçĕнче пырса, халăх пурăнакан пункта çĕмĕрсе кĕнĕ, противникăн пирĕннинчен йышлăрах вăйне сапаласа янă. Бузаев юлташ хăйех çак çапăçура нимĕçсен 5 автоматчикне вĕлернĕ.

* * *

Нимĕçсен 168-мĕш артполкĕнчен тыткăна лекнĕ унтер-офицер Вилли Каменец çапла каласа панă: «Юлашки икĕ уйăх хушшинче пирĕн дивизин личнăй составĕ 70 процента çити пĕтрĕ. Стрелковăй ротăсенче, вăтамран илсен, 50-шар çын кăна тăрса юлчĕ, пулеметсемпе минометсем çурри ытла пĕтнĕ. Артиллери полкĕнче те пысăк çухатусем пулчĕç. Артиллери лашисем чылайĕшĕсем стройран тухрĕç. Йывăр орудисен дивизионне командованин сапаласа ярса ыттисемпе пĕрлештермелле пулчĕ. Салтаксем ывăнса халран кайса çитрĕç. Темиçе кун умлă-хыçлах вĕсем канăç та, ыйăх та курман. Хĕрлĕ Çарăн чаçĕсем пĕрмаях атакăсем туса, вĕсене хăваласа пыраççĕ. Нумай салтаксем çапла калаççĕ: — Пире улăштармасан эпир ăçта куç курать, çавăнталла тарса пĕтетпĕр,—теççĕ».

* * *

Нимĕçсен обер-ефрейторĕ Карл Витнер патне арăмĕ çапла çырнă: «Кунти предприятисенче халĕ ирĕксĕрлесех перекетлемелли йĕрке тăваççĕ. Çакна «тимĕр перекетлĕх» тесе ят панă. Каллин çыннăннех калини эрнерех хăйĕн ĕç укçинчен кăтартса панă чухлĕ уйăрса памалла. Çак укçана вăрçă пĕтсен те пĕр çултан тин параççĕ. Хамăн ĕçук çинчен эпĕ нимĕн те пама пултараймастăп. Мĕнле перекетлĕх тума пултарăп-ха эпĕ? Вĕсем ухмаха тухнă!»

* * *

Пирĕн чаçсем пырса çапнипе Сталино облаçĕнчи Киров ялĕнчен тухса кайнă чухне гитлерла бандитсем ялти 168 çурта, 4 шкула, колхоз клубне, ача çуратмалли çурта, ветеринари лечебницине, магазина çунтарса янă тата çĕмĕрнĕ. Нимĕçсем ялти халăхăн мĕнпур выльăх-чĕрлĕхĕсене, килти япалисене, апат-çимĕç продукчĕсене пĕтĕмпех туртса илнĕ. Нимĕçсем Кирово ялĕнче пулнă вăхăтра мирлĕ граждансене вунпар çынна персе, асаплантарса вĕлернĕ.

Нимĕçсен 16-мĕш армийĕн салтакĕсемпе офицерĕсен çырăвĕсем

ÇУРÇĔР-ХĔВЕЛАНĂÇ ФРОНЧĔ, мартăн 10-мĕш. (ТАСС). Пирĕн чаçсем нимĕçсен çавăрса илнĕ 16-мĕш армине пĕтерсе тăкас операцисене ăнăçлăн туса пыраççĕ. Юлашки кунсенче 2 пунктăн гарнизонĕсенче нимĕçсен 2 ротине пĕтерсе тăкнă. [illegible]

[illegible]

[illegible] татăкли нимех те çук-ха».

Иккĕмĕш çырăван авторĕ, нимĕç летчикĕ, çапла çырать:

«Положени калама çук япăх. Эпир ункăра. Унки питĕ çирĕп. Хамăр халлĕн кăна çав ункăран тухма пире питĕ йывăр. [illegible]

[illegible]

И. Е.

Вăрă-хурахсем тивĕслипех туянчĕç

КАЛИНИН ФРОНЧĔ, мартăн 10-мĕш. (ТАСС). [illegible]

Е. КОРЯВИЧЕВ.

Иранра çĕнĕ правительство туни

ТЕГЕРАН, мартăн 8-мĕш. (ТАСС). Мартăн 2-мĕшĕнче премьер-министр Форуги, министрсен кабинечĕн ĕлĕкхи членĕсем отставкăна тухнине кура, меджлиса хăйĕн правительствин çĕнĕ составне тăратнă. Анчах правительствăна шаннипе шанманнине палăртса сасăланă чухне правительство майлă сасăлакансен йышĕ кăшт çеç ытларах пулнă. Ларура пулнă 112 депутатран правительство майлă сасăланисем 65 пулнă, 4-шĕ хирĕç сасăланă, ыттисем пачах сасăламан.

Хăйĕн майлă сасăлакансен йышĕ çавнашкал сахал пулнипе, Форуги пуç пулса тăракан кабинет хăйĕн положенине ытла тĕреклех мар тесе йышăннă та отставкăна кăларма ыйтнă.

Мартăн 6-мĕшĕнче шах Мохаммед Реза Пехлеви çĕнĕ кабинет йĕркелеме Али Сохейлине хушнă. Али Сохейли кивĕ правительство составĕнче ютçĕршыв ĕçĕсен министрĕ пулса ĕçленĕ, вăл кăçал, январĕн 20-мĕшĕнче, СССР, Великобритани тата Иран пĕр-пĕринпе союз туни çинчен çырнă договор çине алă пуснă пулнă.

Мартăн 6-мĕшĕнче меджлисăн хупă ларăвĕ пулса иртнĕ, ларура премьер-министер çинчен сÿтсе-явнă. Ларура пулнă 109 депутатран 102 депутат çĕнĕ кабинета Сохейли йĕркелетĕр тесе сасăланă. Сохейли килĕшнĕ, çĕнĕ кабинет йĕркелеме тытăннă. Çĕнĕ кабинет составне вăл меджлиса çирĕплетме çывăх кунсенчех тăратмалла.

ТЕГЕРАН, мартăн 9-мĕш. (ТАСС). Али Сохэйли, шах ăна çĕнĕ правительство туса йĕркелеме хушнă май, министрсен çĕнĕ кабинетне туса, унта çаксене кĕртнĕ: Сохэйли—премьер-министр, шалти ĕçсен министрĕ тата вăхăтлăха ютçĕршыв ĕçĕсен министрĕн обязанноçĕсене туса тăраканĕ; Али—юстици министрĕ (вăл çав вырăнта унчченхи правительствăра та тăнă). Азди—çулйĕр министрĕ (унчченхи правительствăра финанс министрĕн заместителĕ пулнă); Бадер—финанс министрĕ; Хажир—суту-илÿпе промышленность министрĕ (укçа-тенкĕ комиссин председателĕ пулнăскер); Хусейн—çĕрĕç министрĕ (çĕрĕç управлени директорĕн заместителĕ пулнăскер); Бахрами—почта тата телеграф министрĕ; Адль—сутăç министрĕ (юридически институтăн директорĕ пулнăскер); Хикмет—сывлăха сыхлав ĕçĕн министрĕ (унчченхи правительствăра суту-илÿпе промышленность министрĕ пулнăскер).

Хĕрарăмсен пĕтĕм тĕнчери кунĕ ячĕпе Чунцинра митинг пулнă

ЧУНЦИН, мартăн 9-мĕш. (ТАСС). Ĕнер хĕрарăмсен пĕтĕм тĕнчери кунĕ ячĕпе Чунцинра митинг пулса иртнĕ. Унта 3 пин çынна яхăн пулнă. Митингра Чан Кай-ши арăмĕ сăмах тухса каланă.

Митингра пулнисем Китай хĕрарăмĕсене чĕнсе каланă, çав чĕнÿре çапла çырнă: «Эпир Китай хĕрарăмĕсене хамăр çĕршыв пуянлăхĕн ресурсĕсенчен çар хатĕрĕсемпе япаласем тăвассине пур майсемпе те вăйлатма чĕнетпĕр. Эпир тĕнчери мĕнпур çĕршывсен хĕрарăмĕсемпе пĕрлешесшĕн тата тĕрĕслĕхе хÿтĕлес, пуриншĕн те ырлăх тăвассине ĕçе кĕртес тĕлĕшпе чăннипех пĕр шухăшлă пулса пĕрле ĕçлесшĕн».

Финляндин США-ри посланникĕн куçса çÿрес ирĕклĕхне чакарни

ВАШИНГТОН, мартăн 10-мĕш. (ТАСС). Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсен государственнăй департаменчĕ ĕнер çапла пĕлтернĕ: Финляндин США-ри посланникĕн тата Финляндин дипломатиллĕ миссийĕн ытти членĕсен Америкăра куçса çÿрес ирĕклĕхне чакармалла тунă.

Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсен Финляндири представителĕсене Германия Совет Союзĕ çине тапăннăранпа Финляндире куçса çÿреме чарнă пулнă. «Нью-Йорк таймс» хаçат, çак ыйту пирки сăмах хускатса, çапла çырнă: «Финляндин США-ри представителĕсене куçса çÿреме чарас тĕлĕшпе питех те хăюсăр утăм тунă. Финляндин Вашингтонри дипломатиллĕ миссийĕн дипломати тата çар ытăвĕсемпе çырса Финляндие ăсатакан докладĕсем Германин генеральнăй штабĕшĕн питех те паха материалсем пулса тăраççĕ», тенĕ.

Америкăн Европăри тинĕс-çар вăйĕсен çĕнĕ командующийĕ

ЛОНДОН, мартăн 10-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсен главнăй тинĕс штабĕн начальникне — Старк адмирала—Америкăн Европа шывĕсенчи тинĕс-çар вăйĕсен командующийĕ тунă. Главнăй тинĕс штабĕн начальник ĕçĕсене туса пырассине Америка флочĕн командующийĕ Кинг адмирал хăй çине илнĕ.

Габриэль Перин юлашки çырăвĕ

ЛОНДОН, мартăн 8-мĕш. (ТАСС). Англин информаци министерстви пĕлтернĕ тăрăх, Лондонра пурăнакан ирĕклĕ француз çыннисем Францин паллă коммунисчĕ Габриэль Пери хăйне гитлеровецсем асаплантарса вĕлериччен темиçе минута маларах çеç çырнă çырăва илнĕ. Габриэль Пери çапла çырнă:

«Выгсарникун, 8 сехет ирхине. Ман пата тин çеç тĕрмери священник килсе кайрĕ, вăл мана темиçе минутăран заложник шучĕпе персе вĕлерессĕ çинчен пĕлтерчĕ. Шерш-Миди тĕрмин влаçĕсенчен эпĕ хамăн пурлăха усрама ыйтатăп. Эпĕ вилнĕ хыççăн манăн документсенчен хăшпĕрипе усă курĕççĕ, тен. Хамăн пĕтĕм пурнăçăмра хисепленĕ идеалсене эпĕ мĕн виличченех пăрахманни çинчен манăн тусăмсем пĕлччĕр. Тăван çĕршыв çыннисем пĕлччĕр: эпĕ Франция пурăнтăр тесе вилетĕп.

Юлашки хут эпĕ хамăн совеçе тĕрĕслетĕп, манăн совесть нимĕн пирки те асапланмасть. Ман сирĕнтен пурне те çакăн çинчен пĕлтерме ыйтас килет: эпĕ çĕнĕрен пурăнма пуçлас пулсан та, халиччен пынă çулпалах кайнă пулăттăм.

Темиçе минутăран эпĕ хамăн парнене хыватăп, вăл парне çутă çаракан шурăмпуç килессине çывхартĕ. Вилĕм çине эпĕ çирĕппĕн пăхатăп. Сывă пулăр. Сывă пултăр Франция!»

Францире вăрттăн тухса тăракан «Либерасион» ятлă революциллĕ хаçатăн юлашки номерĕ пĕлтернĕ тăрăх, Габриэль Пери туберкулезпа чирленĕ пулнă, тĕрмере ларни унăн сывлăхне пĕтĕмпех хавшатса çитернĕ. Асаплантарса вĕлермелли вырăна ăна алă çинче йăтса пынă, анчах та вăл çапах та паттăр юрă юрласа вилнĕ.

Лăпкă океан çинчи вăрçă

АМЕРИКА ПĔЛТЕРĔВĔСЕМ

НЬЮ-ЙОРК, мартăн 9-мĕш. (ТАСС). Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсен çар министерствин коммюникинче çаксене кăтартса панă: Батаан çурутравĕ çинче (Филиппинра) Америка артиллерийĕ Япони пехотин фронт еннелле грузовиксемпе пыракан полкĕ çине сасартăк тупăсенчен пеме тытăннă. Çакăн пек атака тунипе Япони пехоти пысăк çухатусем тÿснĕ. Полкра 2.500 çын таран шутланнă. Тупăсенчен пенипе 29 грузовике тата вĕсем çинче пулнă салтаксенчен шумайĕшне пĕтерсе тăкнă.

АНГЛИ ПĔЛТЕРĔВĔСЕМ

ЛОНДОН, мартăн 9-мĕш. (ТАСС). Австрали командованийĕн коммюникки пĕлтернĕ тăрăх, мартăн 7-мĕшĕнче Çĕнĕ Гвинея утравĕн çурçĕр çыранĕнче Япони карапĕсем çинчен десант антарнă. Хăйсен десантпа тинçĕре кăларакан войскисене японецсем карапсем çинчи артиллерирен персе тата авиаципе хÿтĕлесе тăнă. Десант войскисем тинçĕре тухса çитсенех, Австрали самолечĕсем Японин карапĕсене атакăланă. Малтанлăха илнĕ хыпарсем тăрăх, Японин çар карапĕсем çинчен зенитнăй артиллери персе тăнине пăхмасăрах, Австрали самолечĕсем çинчен пăрахнă бомбăсем тĕл лекнине палăртнă. Австрали самолечĕсем хăйсен базине шурте таврăннă.

Англин авиаци министерстви çапла кăтартса парать: японецсем Ява утравĕ капитуляци туни çинчен тата Японин войскисем Рангун хулине йышăнни çинчен пĕлтернĕ. Анчах Лондонра ку пĕлтерĕве ĕненесшĕнех мар. Чăн та, кăтартнă районсенчи вăрçă ĕçĕсем союзниксемшĕн йывăр пирки нимĕн пытармалли те çук. Çапах та Ява утравĕ çинче вăйлă çапăçусем чарăнман пулĕ тесе шутлаççĕ. Илнĕ хыпарсем тăрăх, Англин Бирмăри войскисем Японин чылаях пысăк вăйсем хĕссе пынипе Пегу районĕнче чарса тăраççĕ.

ЛОНДОН, мартăн 10-мĕш. (ТАСС). Япони войскисем Рангун хулине йышăнса илни çинчен кунта официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ. Кунпа пĕрлех тата çакна та кăтартса панă: Рангунран чакса тунă чухне малтан палăртса хунă план тăрăх унти мĕнпур сооруженисене, çав шутрах докĕсенчи оборудованисене, нефтеперегоннăй заводсене тата илсе тухса кайма май килмен техникăллă ытти оборудованисене çĕмĕрсе хăварнă. Пегу районĕнче (Рангунран çурçĕр еннерех) Англипе Япони войскисем хушшинче пысăк мар тытăçусем пулса иртеççĕ.

ЯПОНИ ПĔЛТЕРĔВĔСЕМ

ТОКИО, мартăн 9-мĕш. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ тăрăх, Япони войскисем мартăн 8-мĕшĕнче Бирмăра Рангун хулине йышăнса илнĕ. Рангунран 50 милльăра çурçĕр еннерех ларакан Пегу хулине мартăн 7-мĕшĕнче йышăннă.

ТОКИО, мартăн 9-мĕш. (ТАСС). Домей Цусин агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Голландин Индийĕн Ява утравне хÿтĕлекен войскисен Сурабайя тата Бандунг çывăхĕнчи тĕп вăйĕсем мартăн 9-мĕшĕнче Япони войскисене хирĕç тăма чарăннă.

Шыв илессине хирĕç кĕрешекен чрезвычайнăй тройкăн

1-мĕш №-лĕ приказĕ

Çуркуннехи шыв тулнине кĕтсе илме вăхăтра хатĕрленес, тума кирлĕ мероприятисене пурне те тăвас, государствăн кирлĕ сооруженисене — кĕперсене, пĕвесене тата ыт. те пĕр çĕмĕрсе каясран сыхласа хăварас, граждансене инкек-синкек курмалла мар тăвас шутпа çаксене тума хушатăп:

1. Шыв илессине хирĕç кĕрешекен районсенчи тата хуласенчи пур тройкăсен:

а) Шыв илекен вырăнсенче чăннипе мĕн чухлĕ тавар, йывăç тата ытти пурлăх пулнине хисепе илмелле, шыв илме тытăничченех вĕсене шыв илеймен зонăсене куçарса хумалла.

б) Шыв илекен зонăсенче халăх пурăнакан пунктсем, учрежденисем, складсем мĕн чухлине тĕрĕс шута илмелле, пурăнмалли çуртсем, транспортсем тата пурлăхсене вырнаçтармалли складсем хатĕрлесе хурса, шыв илекен çав зонăри халăха, учрежденисемпе организацисене вăхăтлăха ăçта куçармалли плана тумалла.

Еççынни депутачĕсен районсенчи, хуласенчи тата ялсенчи Совечĕсен исполкомĕсен, колхоз правленийĕсен тата ытти организацисемпе учрежденисен те вĕсен пурăнмалли çуртсемпе складсем пур пулсан, шыв илессине хирĕç кĕрешекен районсенчи тата хуласенчи чрезвычайнăй тройкăсем ыйтсанах, шыв илекен зонăран куçарнă халăха тата тĕрлĕ пурлăха вырнаçтарма çав помещенисене вăхăтлăха парас пулать.

в) Шыв илекен зонăсенчи пĕвесене, шыв арманĕсене, гидроэлектростанцисене, чугунçулсене, шоссесене, грунтлă çулсене, кĕперсене, шыв флотне, телеграфпа телефон линийĕсене тата ытти сооруженисене шыв çĕмĕрсе ан кайтăр тесе, кирлĕ мерăсем йышăнас пулать; малтанласа çак ĕçсене туса ирттермелле — пăркасансене юсамалла тата çирĕплетмелле, пăрсене ватмалла, шыв юхмалли канавсемпе сооруженисене тасатмалла, материалсен аварийнăй запасне (хăрăк-шанкă, улăм, тислĕк, троссем тата ытти те) хатĕрлемелле, çуркунне шыв тулнă вăхăтра ĕçлемелли инструментсемпе инвентарьсене пурне те çителĕклĕ хатĕрлесе хумалла. Шыв тулнă вăхăтра пĕвесемпе кĕперсем тата ытти сооруженисем патĕнче талăкĕпех дежурнăйсем тăратмалла.

2. Милици тата Освод органĕсем шыв илессине хирĕç кĕрешес ĕçе хăнăхнă вырăнти халăхран аварирен çăлакан командăсем йĕркелемелле, шыв транспорчĕсемпе ĕçре усă курма вĕсене пурне те шута илмелле, юханшывсем урлă каçмалли вырăнсенче осводовецсене тата çăлакансен бригадисене талăкĕпех хурал тăратмалла, вĕсен çителĕклĕ таран транспорт тата çăлмалли инвентарьсем пулмалла.

3. Наркомторгăн, чăвашпотребсоюзăн, вăрмантпродторгăн тата чăвашторгăн шыв илнĕ вăхăтра вĕсен базисен складĕсенчен татăлакан халăх пурăнакан пунктсене çителĕклĕ таран запас продовольстви, тавар тата фураж тăратмалла.

4. Шыв илнĕ вăхăтра хăйсен снабженин тĕп базинчен татăлса юлма пултаракан МТС директорĕсен, коммунальнăй тата ытти предприятисен руководителĕсен шыв илме тытăниччен малтанах хăйсем валли çителĕклĕ таран горючи, сĕрмелли материал тата запаслă чаçсем кÿртмелле.

5. Чăваш АССР сывлăх халăх комиссариачĕн шыв илнĕ вăхăтра инкек курнă граждансене пулăшу пама кирлĕ санитари хатĕрĕсемпе медикаментсем хатĕрлесе хумалла, медицина енĕпе дежурнăй пунктсем организацилемелле.

6. Чăваш АССР çутĕç халăх комиссариачĕн — республикăн çурçĕр пайĕсенче çуркунне шыв тулнă вăхăтра ачасене сыхлас енĕпе шкулта кирлĕ ĕçсем туса ирттермелли çинчен кăтартусем памалла.

7. Районсенчи тата хуласенчи тройкăсен ĕççынни депутачĕсен (районсенчи, хуласенчи) Совечĕсен исполкомĕсем умне шыв илессине хирĕç кĕрешесси çинчен тивĕçлĕ решенисем йышăнас пирки ыйту лартмалла.

Шыв илессине хирĕç кĕрешекен Чрезвычайнăй Тройкăн председателĕ— Чăваш АССР Совнарком Председателĕн заместителĕ В. ГРИГОРЬЕВ.

ССР Союзне ирĕклĕ Францин представителĕсем килни

Мартăн 8-мĕшĕнче Мускава ирĕклĕ Францин генерал де-Голль пуçпулса тăракан национальнăй комитечĕн представителĕсем г. Гарро тата бригаднăй генерал Пети килнĕ. (ТАСС).

Англи авиацийĕпе артиллерийĕн ĕçĕсем

ЛОНДОН, мартăн 10-мĕш. (ТАСС). Официальнăй пĕлтерÿсем тăрăх, мартăн 10-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле Англин Германи çине вĕçнĕ бомбардировщикĕсем пуринчен ытла Эссена тапăннă, унта Круппăн пысăк çар завочĕсем вырнаçнă.

Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Англин инçете перекен артиллерийĕн батарейисем çав çĕрлех Па-де-Кале проливĕ урлă пеме тытăннă. Пурĕ пĕр сехете яхăн персе тăнă. Перессе Франци çыранĕсем хĕррипе пыракан нимĕç суднисем çине пенĕ пулмалла.

Америкăра государство парăмĕсен виçине ÿстереççĕ

ВАШИНГТОН, мартăн 10-мĕш. (ТАСС). Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсен финанс министрĕ Моргентау государство парăмĕсен виçине ÿстерессси çинчен сĕнÿ тăратнă. Вăл государство парăмĕсен виçине халиччен пулнă 65 миллиард доллартан 125 миллиард доллара çитиччен ÿстерме сĕннĕ. Ку сĕнĕве представительсен палатин финанс комиссийĕ сÿтсе-явса ырланă. Моргентау каланă тăрăх, государство парăмĕ çак çулхи июлĕн 1-мĕшĕ тĕлне ÿссе 70 миллиард та 600 миллион доллара çитмелле, 1943 çулти июлĕн 1-мĕшĕ тĕлне вăл 110 миллиард доллара çитиччен ÿсмелле.

Ютçĕршывсенче

● Гитлеровецсемпе квислинговецсем Норвеги халăхĕн тĕнне хĕсĕрленине хирĕç протестлесе, Норвегире чылай епископсем вырăнтан тухнăччĕ. Халĕ Норвегири 600 пастор хăйсем çав епископсемпе пĕр шухăшлă пулни çинчен пĕлтернĕ.

● Румынире Антонеску çыннисем государство аппаратĕнчи чиновниксене хирĕçле репрессие татах вăйлатса пыраççĕ. Шанчăксăр çынсене учрежденисенчен çĕршерĕн кăлара-кăлара яраççĕ. Лагерьсенче румынсен 100 чиновникне яхăн хупса лартнă.

● Виши правительстви Францин оккупацилемен зонинче март уйăхĕнче памалли çăкăр нормине татах чакарнă.

● Грецире шатраллă тиф чирĕ питĕ сарăлнă. Чирлесе вилнисем те нумай. Уйрăмах Триккала хулинче тифпа нумай вилеççĕ. Венгрин нумай районĕсенче те тиф чирĕ вăйлăн сарăлнă. Кунта ăна Хĕвелтухăç фронтĕнчен таврăнакан Германи салтакĕсем илсе килнĕ.

Ирĕке кăларнă облаçсенчи колхозсене вăрлăх парса пулăшаççĕ

ИШЛЕП. Районри К. Маркс ячĕпе тăракан колхозра мартăн 11-мĕшĕнче колхозниксемпе колхозницăсен пĕрлешÿллĕ пухăвĕ пулса иртрĕ. Пухура колхозниксем ирĕке тухнă облаçсемпе районсенчи колхозсене вăрлăхлăх тырă парса пулăшас ыйтăва сÿтсе-яврĕç. Пухура Л. Рафанов, С. Горбунцов, Р. Петров, Я. Федоров колхозниксем тухса каларĕç. Пуху ирĕке тухнă вырăнсенчи колхозсем валли колхозăн общественнăй фондĕнчен 120 центнер вăрлăх тырă пама йышăнчĕ. Уйрăм колхозниксем вăрлăхлăх çĕрулми парса пулăшаççĕ. Пухура С. Горбунцов, Н. Иванов, Т. Григорьев тата ытти колхозниксем 40-шер килограмм çĕрулми парса пулăшма пулчĕç.

П. ЛУКИН.

Совет Союзĕ тăрăх

Укçа-тенкĕпе япала лотерейи валли коверсем хатĕрлеççĕ

Ашхабадри коверсем тăвакан художественно-экспериментальнăй мастерской укçа-тенкĕпе япала лотерейи валли коверсен пĕрремĕш ушкăнне хатĕрлесе хунă. Вĕсен тĕррисем пурин те ахаль-текински орнамент йышши пулать. (ТАСС).

Вĕренепе хурăн шывĕнчен шерпетсем тăваççĕ

Хабаровск крайĕнчи Бикински, Вяземски тата Лазо ячĕпе тăракан районсенче крайпищепром предприятийĕсем вĕренепе хурăн шывĕнчен сахăрлă шерпетсем тăвас ĕçе организацилеççĕ. (ТАСС).

Пĕлтерÿ

Мартăн 13-мĕшĕнче, каçхине 8 сехетре, ВКП(б) Шупашкар хула комитечĕн агитпункчĕнче: **«Суворов—вырăссен аслă полководецĕ»** темăпа тÿлевлĕ лекци пулать.

Лекцие **Кудряшов** профессор вулать.

Лекцие кĕмелли билетсене агитпунктра илме пулать.

ВКП(б) хула комитечĕн агитпункчĕ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Первичная организация ВКП(б) и Местком профсоюза при Совнаркоме Чувашской АССР выражают глубокое соболезнование семье Заместителя Председателя Совнаркома Чувашской АССР тов. ГРИГОРЬЕВА Василия Григорьевича по поводу преждевременной смерти его дочери — ТАМАРЫ

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн—4—26, пропагандăпа парти пурнăç пайĕн — 5—31, ялхуçалăх пайĕн — 3—99, «Ленин çулĕпе» журналăн тата комсомол пурнăç пайĕн — 0—85, издательство конторин — 0—23.

НГ 408

Гор. Чебоксары, типография № 1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР, Заказ № 260. [illegible]